Предлагаем вашему вниманию интервью руководителя Шумерлинского межрайонного следственного отдела СУ СКР по Чувашии Александра Гаврилова Вурнарской районной газете "Путь Победы"

"Айӑпли следствирен пӑрӑнаймасть"

14 января 2017 г.

Ыран, январӗн 15-мӗшӗнче, Раççей следстви комитетне йӗркеленӗренпе ултӑ çул çитет. Çавна май пирӗн корреспондент Çӗмӗрлери районсем хушшинчи следстви пайӗнче пулнӑ, пай ертӳçипе Александр Гаврилов юстици подполковникӗпе калаçнӑ.

– Александр Валерьевич, професси уявӗ – пӗтӗмлетӳсем тумалли сӑлтав та. Хӑвӑрӑн следстви пайӗн иртнӗ çулхи ӗçне мӗнле хакланӑ пулӑттӑр?

– 2016 çулта следстви пайӗ преступленисемпе çыхӑннӑ 600 ытла пӗлтерӗве пӑхса тухнӑ, вӗсем тӑрӑх 176 уголовлӑ ӗç пуçарнӑ. Суда 200 преступлени тӗлӗшпе 111 уголовлӑ ӗç ярса панӑ. Ку пысӑк цифра. Пирӗн штатра вара 9 çын кӑна. Пай ултӑ муниципалитета: Çӗмӗрлепе Улатӑр хулисене, Çӗмӗрле, Улатӑр, Вӑрнар тата Пӑрачкав районӗсене пӗрлештерет, тивӗçтерӳ территорийӗнче пӗтӗмпе 135809 çын. Тиев пысӑк пулин те пирӗн сотрудниксем службӑри тивӗçе чыслӑн, чунтан пурнӑçлаççӗ.

– Эсир тӗпчекен преступленилле ӗçсем хушшинче халӑхра анлӑ кӑсӑклантару çуратакан ӗçсем пур-и? Чи пӗлтерӗшлисем пирки калаймӑр-и?

– Çынсене уйрӑмах ачасем хутшӑннипе пулнӑ ӗçсем шухӑшлаттараççӗ-тӗлӗнтереççӗ. Пӗлтӗр акӑ Вӑрнар районӗнче 27-ри хӗрарӑм ывӑлне тивӗçлӗ пӑхманни пирки массӑллӑ информаци хатӗрӗсем нумай çырчӗç. Следстви тата район сучӗ ниçта та ӗçлемен çак хӗрарӑм 2014 çулхи сентябрьтен тытӑнса кӑçалхи августчен 2010 çулта çуралнӑ ывӑлне пӑхас тивӗç пирки час-часах маннине палӑртнӑ. Ӑна вӑл тӑтӑшах хӗненӗ, патакпа, телефон шнурӗпе çапнӑ. Пӗррехинче вара вӗлтренпе çунтарнӑ. Тӗрӗссипе, ачи çине вӑл сӑлтавсӑр тенӗ пекех алӑ çӗкленӗ. Шашлыка кайса эрех ӗçнӗ хыççӑн ывӑлне вӑрманта пӑрахса хӑварни те пулнӑ. Юрать, ача киле çул тупма пултарнӑ. Ун чухне амӑшӗ килӗнче пулман, ача пӗчченех çывӑрма выртнӑ. Хӗрарӑм ӑна ытти чух та пӗччен хӑварнӑ, хӑй ӗçме тухса кайнӑ. Çак пулӑмсене свидетель çирӗплетнӗ. Хӗрарӑм та айӑпне туллин йышӑннӑ. Уголовлӑ ӗçе уйрӑм йӗркепе пӑхса тухнӑ. Ун

© 2024 Следственное управление Следственного комитета Российской Федерации по Чувашской Республике

тӗпчевӗсем тӑрӑх район администрацине тата ял поселенине представленисем тӑратнӑ. Суд хӗрарӑма условнӑй майпа 3 ҫул та 1 уйӑхлӑх ирӗкрен хӑтарма йышӑннӑ. Ҫемьене профилактика органӗнче учета илнӗ.

Хальхи вӑхӑтра Вӑрнар районӗнчи виҫӗ ҫамрӑк – 20 тата 21-ри пиччӗшсем, ҫавӑн пекех вӗсен 22-ри пӗлӗшӗ тӗлӗшпе уголовлӑ ӗҫе тӗпчеҫҫӗ. Ку ӗҫ кӗҫӗн ҫулхи хӗрачана мӑшкӑлланипе ҫыхӑннӑ. Следстви версийӗпе, 2015 ҫулхи июньте 22-ри арҫын хӗрачапа хӑйӗн пӗлӗшӗн килӗнче ар ҫыхӑнӑвне кӗнӗ. Ҫав уйӑхрах пӗртӑван пиччӗшӗсем ҫак ялтах хӑйсен килӗнче ҫак хӗрачанах мӑшкӑлланӑ, вӗсенчен аслӑраххи 2016 ҫулхи ноябрьте каллех хӗрачапа ар сӗмӗллӗ ӗҫе пурнӑҫланӑ. Ҫак фактсем шалти ӗҫсен органӗсен сотрудникӗсем вӗрентӳ учрежденийӗсенче профилактика рейчӗсем ирттернӗ вӑхӑтра ҫиеле тухнӑ. Ӗҫ тӗлӗшпе тӗрлӗ экспертизӑсем палӑртнӑ. Тӗпчев малалла пырать.

Айӑпа кӗнӗ ҫынсем те халӑхра тӗрлӗ шухӑш ҫуратаҫҫӗ. Ҫӗмӗрле районӗнчи пӗр депутат акӑ автомобиль рулӗ умне ӳсӗрле ларнӑшӑн явап тытнӑ пулнӑ, анчах пӗлтӗр ГИБДД инспекторӗсем ӑна ҫак сӑлтавпах тытса чарнӑ.

Уголовлӑ явапран Вӑрнар хула поселенийӗн администрацийӗн унччченхи пуҫлӑхӗ те хӑтӑлайман.

2014 ҫулхи октябрьте чиновник пӗр арҫынна, вӑл черетре тӑман пулин те, общежитире пӳлӗм уйӑрса панӑ, 2015 ҫулхи февральте ҫак пӳлӗме тӳлевсӗрех харпӑрлӑха парасси ҫинчен килӗшӳ тунӑ. Ҫапла поселок бюджетне 350 пин ытла тенкӗлӗх тӑкак кӳнӗ.

Унсӑр пуҫне, иртнӗ ҫулхи ноябрь вӗҫӗнче вӑл вырӑнти пӗр коммерци организацийӗпе кивӗ ҫуртсене пӑсассипе 225 пин тенкӗлӗх килӗшӳ ҫырнӑ, анчах та ӗҫсене 174 пин тенкӗ енне ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Муниципаллӑ пӗрлӗх хыснине каллех 50 пин ытла тенкӗлӗх тӑкак кӳнӗ.

Суд тенкелӗ ҫине ларакан тӗлӗшпе экспертиза ирттернӗ, свидетельсене ыйтса пӗлнӗ. Чиновник хӑй айӑпне туллин йышӑннӑ. Суд ӑна условнӑй майпа пӗр ҫул ирӗкрен хӑтарма йышӑннӑ.

Выльӑх-чӗрлӗх чирӗсемпе кӗрешекен Пӑрачкав район станцийӗн пӗр ялти ветеринари участокӗн ертӳҫин хӑтланкаларӑшӗ те тӗлӗнмелле. Пӗлтӗрхи август пуҫламӑшӗнче вӑл Напольное ялти икӗ килте сыснасене сипленӗ. Вӗсенчен хӑшӗсен сыснасен Африка чирӗн паллисем те пулнӑ, анчах та пӗр килте икӗ сысна вилсен ветеринар сӑлтавне палӑртмасӑрах кил хуҫине вилнӗ выльӑхсене ял ҫывӑхӗнче чавса пытарма хушнӑ. Ҫавна май ку территорие хӑрушӑ чир вирусӗ ҫакланнӑ. Ку тепӗр килте сысна вилсен тин палӑрнӑ.

– Коррупципе кӗрешесси тӗлӗшпе лару-тӑру еплерех-ши тата?

– Ку ыйту пирӗн ӗҫ-хӗлре чи ҫивӗччисенчен пӗри. 2016 ҫулта пирӗн следовательсем коррупци сӗмӗллӗ 37 ӗҫ пуҫарнӑ. Уголовлӑ ӗҫсенчи фигурантсем – депутатсем, ял поселенийӗсен

© 2024 Следственное управление Следственного комитета Российской Федерации по Чувашской Республике

пуçлăхĕсем, федераллă органсемпе учрежденисен, муниципалитетсен, коммерцилле организацисен ертÿçисем. Сăмахран, УФСИНăн КП-8 экс-начальникне колонире ларакансене хăйĕн çурт строительствинче ĕçлеттернĕшĕн, Улатăрти профессилле вĕренÿ заведенийĕн тĕп бухгалтерне 1 млн та 800 пин тенкĕ укçа вăрланăшăн айăпланă. Кунашкал ĕçсем татах пулнă.

– Следовательсен ĕçĕ çынсен шăпипе çыхăннă. Вăл пысăк яваплăх ыйтать. Мĕнлерех пулмалла-ха ку тытăмра тимлекенĕн?

– Следователь ĕçĕ çăмăл мар. Тишкерме пĕлни, анлă тавракурăм, хăйĕн шухăшне çирĕплетме-ĕнентерме пултарни, çивĕч ăс-хакăл, психика çирĕплĕхĕ, чăтăмлăх, яваплăх, тавçăрулăх, тĕрĕслĕх – акă пирĕн ĕçченсен тĕп енĕсем. ,çе чунтан парăнсан кăна ăна тĕрĕс татса пама пулать.

Професси уявĕ умĕн хамăр сотрудниксене пысăк профессионализмшăн, чăтăмлăхшăн, принципиаллăхшăн, хăйсен вăхăтне шеллемесĕр службăна парăннăшăн тав тăватăп. Вĕсен çемйисене те ăнланнăшăн пысăк тав. Пурне те, вăл шутра следстви ветеранĕсене те, çамрăксене пулăшса пынăшăн, уйрăммăн – Иван Леонидович Ерофеева, отставкăри юстици подполковникне, чĕререн саламлатăп. Следстви пайĕн çитĕнĕвĕ – право хуралĕн органĕсемпе, вăл шутра прокуратурăпа, полиципе тата ФСБпа пĕрле пурнăçланă пĕрлехи ĕç. Вĕсене те пысăк тав.

16 Января 2017

Адрес страницы: https://chuvashia.sledcom.ru/service/Professiya_sledovatel/item/1094063

© 2024 Следственное управление Следственного комитета Российской Федерации по Чувашской Республике